*Миклай КАЗАКОВ,*
*Мари халăх поэчĕ.*

# ПЕТĔР ХУСАНКАЯ

Миçе тĕслĕ кайăк,
Миçе саслă кайăк
Поэзи вăрманĕ усрать!
Пин-пин кĕвĕрен те
Чĕрем Хусанкайăн
Хăйле кĕввине уйăрать.

Чăвашăн, марийĕн
Усалĕ-ыррийĕ
Пĕрле пирĕн пулнă ялан.
Ал-аллăн çĕкленĕ,
Çĕнетнĕ çĕр çийĕн
Пĕрле халь утать ик тăван.

Чăн ирĕклĕх—анлă,
Ăна мухтамалăх
Пайтах юрă хыврăн, поэт!
Сассу Атăл урлă,
Хĕвел шевли майлă,
Каçать, ман çĕре те çитет.

Эс утмăл тултартăн,
Пăртак кăвакартăн,
Чĕрӳ те хĕсет, Хусанкай,
Çапах ярăм-ярăм
Сăмах шăрçалатăн,
Ан парăн, малтан мала кай!

1967 ç.